26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
18
ЮНКУН
165(6402) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Пĕтĕм вăя—тырпулсене пухса кĕртме!

Республикăри колхозсем тырпулсене пухса кĕртес плана августăн 15-мĕшĕ тĕлне 64,6 процент тултарчĕç. Малта пыракан Шупашкар районĕ пĕтĕм тырпулăн 78 процентне пуçтарса илчĕ. Вăрмар, Куславкка, Советски районсем те начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсем уборка планн. 73 процентран пуçласа 78 процента çити тултарнă. Иртнĕ пилĕккунлăхра уйрăмах Шупашкар районĕнчи колхозсем лайăх ĕçлерĕç. Августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшне çити вăхăтра ку районра 2000 гектар çеç вырнă пулсан, августăн 10-мĕшĕнчен 15-мĕшне çити вăхăтра Шупашкар районĕ 3400 гектар вырнă. Районри колхозсем лайăх çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин те пĕлсе усă курчĕç, тыра вырнă çĕре пĕтĕм машинăсене, пĕтĕм ĕç вăйне мобилизацилеме тăрăшрĕç. Ку районсенче тырпулсене вырса пĕтернĕ колхозсем сахал мар ĕнтĕ.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕç иртнĕ пилĕккунлăхра пур районсенче те ăнăçлăн пулса пычĕ теме çук-ха. Пачах урăхла: Пăрачкав, Кувакино, Улатăр, Чкаловски, Первомайски районĕсем питех те çителĕксĕр ĕçлерĕç. Вĕсем пилĕк кун хушшинче 1000 гектартан пуçласа 2000 гектар таран çеç вырнă, августăн 15-мĕшĕ тĕлне плана 35 процентран пуçласа 52 процент таран çеç тултарнă. Çак районсен руководителĕсем, унти колхозсен председателĕсем такам килсе пулăшасса кĕтсе ларасçĕ пулас, тырпулсене хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес, ĕçре татăклă улшăну тăвас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Елчĕк районĕ пирки те çавнах каламалла. Малтанхи ўсĕмсемпе лăпланса ларнă пирки, кунта юлашки вăхăтра хăвăртлăхсене чакарчĕç. Çавăнпа та район халĕ пĕрремĕш вырăнран вунулттăмĕш вырăна çити анса ларчĕ.

Хăшпĕр çĕрте çакăн пек руководительсем тĕл пулаççĕ: çанталăк çăмăрлă пулсан, вĕсем йĕпе тесе вырмасăр лараççĕ; çанталăк уяр чухне урăх сăлтавсем тупма тăрăшаççĕ, тыра вырас ĕçе пурпĕрех тивĕçлипе организацилемеççĕ. Ку вăл—кахалсен йăли. Ăна тĕпренех кăклаcа ывăтас пулать. Тыра вырас вăхăтсем халĕ ĕнтĕ иртсе пыраççĕ, уяр çанталăксене кĕтсе ларма текех вăхăт çук. Пирĕн фронтри тăвансем çăмăрне-мĕнне пăхмасăр тăшмана хăвалана пекех, тыра вырас ĕçе те çанталăк чарса тăма тивĕçлĕ мар. Уяр çанталăк пулчĕ пулсан, унпа туллин усă кур, пĕр минутине те сая ан яр. Анчах çăмăрлă çанталăкра та ĕçе чарса ан ларт. Çăмăр çунă чух та тыра выр, типĕт, авăн çап, государствăна валли тыра леççе пар. Çакăн пек йĕркелеме хушать ĕçе хальхи вăхăт. Малта пыракан колхозсем çапла тăваççĕ те. Вĕсем çăмăр вăхăтĕнче вырнă тырра уяр çанталăкпа усă курса е авăнсенче типĕтеççĕ. Тырпула йĕпенсе пăсăлма памаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ колхозсенче авăнсем тăвасси çинчен ятарласа постановлени йышăнчĕç. Чылай районсемпе колхозсен руководителĕсем, малашнехине инçе курма хăнăхманскерсем, çак постановлени мĕнле пысăк вырăн йышăннине вăхăтра ăнланса илмерĕç. Çўлте асăннă, юлса пыракан районсенче çакă ĕнтĕ ĕçри пысăк чăрмав пулса тăрать. Кашни уйрăм хуçалăх тума пултаракан япалана колхозăн кашни бригади валли тума çук-и вара? Паллах, тума пулать, анчах тăрăшни çитмест. Çăмăр çума пуçласан авăн тума тытăнаççĕ, тепĕр кунне çанталăк уяртать те, вара тума пуçланă авăна туса пĕтермесĕрех пăрахса каяççĕ. Çакăн пек тĕслĕхсем пур-ха. Ку вăл ĕç çине ытла та çăмăллăн пăхни çинчен калать.

Ĕç дисциплини çинчен уйрăмах чăрăнса тăмалла. Советски районри «Новый путь» колхозра тыра вырма 8—9 сехетре тин тухаççĕ, кăнтăрла çитнĕ-çитменех киле таврăнаççĕ, апата кĕрсе нумай вăхăта сая яраççĕ. Колхозри бригадирсем Пахомовăпа Михайлова тыра вырма пуçланăранпа та уйра пулса курман. Аçтан-ха ĕнтĕ çакăн пек çĕрте ĕçсем йĕркеллĕ пулса пычăр? Кам вырса-çапса парасса шанаççĕ-ха «Новый путь» колхоз председателĕпе бригадирсем? Кам ирĕк панă вĕсене колхоза çавăн пек юхăнтарса пыма? Çакăн пек ўрĕк-сўрĕк ĕçлекенсем фронт умĕнче пысăк айăпа кĕреççĕ.

Тырпулсене уйран пухса кĕртес ĕçе халĕ пĕтĕм вăя хумалла, ку ĕçе кашни колхознике явăçтармалла, агитациллĕ ĕçе вăйлатса, колхозниксен социализмлă ăмăртăвне анлăн сарса пымалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем БРЯНСК енче çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, 8 километртан пуçласа 15 километра çити малалла куçса, халăх пурăнакан 130 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ЖИЗДРА хулине, ЧЕРНЫЙ ПОТОК, МЛЕДЕНСК, СУДИМИР, ПОДБУЖЬЕ, АЛЕКСЕЕВКА, БУЯНОВИЧИ, МОКРОЕ, МАЛЫЕ ЛУКИ (Карачев хулинчен 14 километр хĕвеланăçнерехре), БАЙКОВО, ВОЛКОВО, КУПРИНА, ГРЕМЯЧЕЕ, ГЛЫБОЧКИ, ХОТЕЕВО ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

Пирĕн СПАС-ДЕМЕНСК районĕнчен тапăнса пыракан çарсем 8 километртан пуçласа 12 километра çити малалла куçнă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ЦЕРКОВЩИНА (Спас-Деменскран 16 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре), ЛЮБУНЬ, ЛЕСКОВКА, БЛИЖЕВИЧИ, ДЕГИРЕВО ятлă халăх пурăнакан пунктсене илнĕ.

ХАРЬКОВ енче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă.

Ытти фронтсенче пирĕн çарсем çапăçса разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Августăн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 79 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, тăшманăн 59 самолетне ўкернĕ.

☆ ☆ ☆

Брянск енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă.

Карачев хулине тытса илнĕ хыççăн совет çарĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла куçнă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла йышăнса илнĕ. Карачев хулинче пирĕн чаçсем трофейăсем нумай тытса илнĕ. Вăл шутра 48 танк, 12 самолет, 87 полевой тупă, 13 хăй тĕллĕн çўрекен тупă, 99 миномет, 225 пулемет, 6.500 винтовка, 223 автомашина, 35 трактор, 16 радиостанци, 12 тĕрлĕрен склад тата боеприпассем нумай тытса илнĕ, вĕсене халĕ шута илеççĕ.

Дмитровск—Орловский хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем 8 километр малалла куçнă, халăх пурăнакан 32 пункта йышăнса илнĕ. Пĕр соединени боецĕсем халăх пурăнакан çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче 800 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 6 тупă, миномётсен 4 батарейине тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Ĕнер пирĕн çарсем Зикеево чугун çул станцине тытса илнĕ те, малалла тапăнса пырса, Жиздра хули патĕнче тăшманпа çапăçма пуçланă. Каçхине совет боецĕсем хулана вăркăнса кĕрсе кайнă, вара урамсенче çĕрĕпех хаяр çапăçусем пынă, пирĕн çарсем тăшмана çĕнтерсе çиеле тухнă. Жиздра хулине нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатнă. Хула патĕнчи вырăнсенче тата хула урамĕсенче пулса иртнĕ çапăçусенче 1.200 гитлеровеца ытла вĕлернĕ, нимĕçсен 11 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă.

Брянск енче пирĕн малалла тапăнса пыракан çарсене саперсем вăйлă пулăшу параççĕ. Каялла чакакан гитлеровецсем кĕперсене çунтарса яраççĕ е ишсе антараççĕ. Пирĕн саперсен чаçĕсем çав кĕперсене хăвăрт юсаççĕ. Тăшман çулсем çинче, халăх пурăнакан пунктсенче тата вĕсем патнелле пымалли вырăнсене çав тери нумай минăсем лартса тултарать. Иртнĕ уйăх хушшинче пулса иртнĕ çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн чаçсем тăшман лартса хăварнă 370.000 минăна тупса сиенсĕрлетнĕ.

* * *

Пирĕн Спас-Деменск районĕнчен тапăнса пыракан çарсем, малалла куçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăнса илнĕ. Тăшман кунта васкаса çĕнĕ вăйсем илсе пынă, хаярран хирĕç тăрать. Пĕр соединенин, гитлеровецсене каялла ывăтаывăта ярса, нимĕçсем вăйлă çирĕплетнĕ пунктсене йышăнса илнĕ. Çав участокра 2 кун хушши пынă çапăçусенче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 çынна çити вĕлернĕ, 26 тупă, 16 танк, 55 пулемет, 29 миномет тата темиçе вунă автомашина пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр чаçри боецсем тăшманăн хаяр контратакине сирсе янă. Çав çапăçура 10 танк персе çĕмĕрнĕ тата нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енче пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин контратакисене сире-сире янă.

Харьковран хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, усăллă позицисене йышăнса илнĕ. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1.600 çынна çити пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 32 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем юханшыв урлă каçса кайнă та, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пурăнакан 2 пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсенчен 3 танк, хăй тĕллĕн çўрекен 2 тупă, 44 пулемет, 13 миномет, боеприпассен складне тата продовольствипе инженерла пурлăх склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре нимĕç пехотин батальонĕ, танксем тата хăй тĕллĕн çўрекен тупăсем пулăшнипе, пирĕн çарсем нумаях пулмасть йышăнса илнĕ высотана каялла тытса илме хăтланнă. Çав кĕске тытăçура пĕр чаçăн подразделенийĕсем 200 гитлеровеца çити вĕлерсе тăкнă. Нимĕçсен 2 танкне çунтарса янă, тăшмана малтанхи позицисем çине хăваласа янă.

* * *

Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен «Белорус» ятлă отрядĕнчи партизансем пĕр уйăх хушшинче нимĕçсен фронт патнелле пыракан 18 çар эшелонне ўпĕнтерсе янă. Çав крушенисенче 10 паровоз çĕмĕрĕлнĕ, 6 паровоз сиенленнĕ, 95 вагонпа платформа пĕтнĕ. Унсăр пуçне тата партизансем шоссе çулĕ çинчи 2 кĕпере сирпĕнтерсе янă, нимĕç салтакĕсене турттарса пыракан 8 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Тăшмана засадăсенчен тапăнса, совет патриочĕсем 140 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, гранатăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Карачев хулинче пурăнакан çынсем А. М. Зимина, Л. Г. Гречанинова, П. Г. Беляева, М. Д. Елизарова тата ыттисем те çапла каласа панă: «Гитлеровецсем Карачев хулине 1941 çулхи октябрĕн 5-мĕшĕнче кĕрсе кайрĕç. Темиçе кун хушшинче вĕсем хулана йăлтах çаратса тухрĕç. Бандитсем магазинсене, хваттерсене, кладовойсене çĕмĕрсе кĕрсе, шкафсене, арчасене уça-уça, мĕнпур хаклăрах япаласене йăлтах вăрласа тухрĕç. Нимĕçсем малтанхи эрнерех хулари мирлĕ 50 çынна ытла персе пăрахрĕç. Гестаповецсем темиçе çĕр çынна арестлесе таçта илсе кайрĕç. Арестленĕ çынсенчен пĕри те хăй килне каялла таврăнни пулмарĕ. Вĕсем çинчен ку таранччен те нимĕн палли те çук. Хула çыннисене арестлесси, вĕлерессичи юлашки вăхăтченех пулса пычĕ. Хула управĕ патĕнче палачсем çакса вĕлермелли туса лартрĕç, вара ун çинче Нестеров хушаматлă пĕр тăвансене тата ытти совет гражданĕсене çакса вĕлерчĕç. Хулари çынсене нимĕçсем нумайĕшне Германие каторга ĕçне хăваласа кайрĕç. Кам та кам тăван çĕршыва хăварса Германие кайма килĕшмесĕр тăчĕ, вĕсене гитлерла çынçиенсем пере-пере пăрахрĕç. Июль уйăхĕнче нимĕçсем малтанхинчен те ытларах ирсĕрленсе ашкăнма пуçларĕç. Каялла чакма тытăнсан, нимĕçсем хулари мĕнпур шкулсене, чул çуртсене тата промышленность çурчĕсене йăлтах çунтарса сирпĕнтерсе ячĕç. Хулара çĕмĕрĕлсе пăсăлман пĕр çурт та юлмарĕ».

Вăрнарсен чĕнĕвне ырласа

КУКЕÇ, августăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Тырпула пухса кĕртес ĕçе район 78 процент пурнăçларĕ. Паянхи кун тĕлне районри колхозсем пурĕ 13.317 гектар тыра вырнă. «Туса», «Крахмал», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тата çурхи тырăсене вырса пĕтернĕ. «Осоавиахим», «Моряк» тата ытти чылай колхозсем ыран-паянах тыра вырса пĕтереççĕ.

Ĕнер районри колхозсем хĕрлĕ обозсем организацилесе, государствăна 1.000 центнер ытла тыра пачĕç. Апаш ялсоветĕнчи колхозсем 47 лавпа Заготзерно пунктне 170 центнер тыра леçрĕç.

В. КАРАУШЕВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Кашни комбайнпа жнейка талăкне 16 сехетрен кая мар ĕçлемелле!

Комбайнпа тыра вырмалли плана тултарнă

ÇĔРПУ, августăн 17-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Чкалов облаçĕнчи комбайнерсемпе малта пыракан трактористсен чĕнĕвне йышăнса, Çĕрпў МТС-ĕн комбайнерĕ Михаил Громов юлташ кăçал «Коммунар» комбайнпа сахалтан та 300 гектар тыра вырса кĕртме пулса социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Ĕçе тухаччен вăл хăйĕн комбайнне тĕплĕн юсанă, краççынпа ĕçлемелле туса хатĕрленĕ.

Хăй çине илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртес тĕллевпе М. Громов юлташ вăхăтпа туллин усă курса ĕçлет. Августăн 11-мĕшĕ тĕлне вăл 85 гектар çинчи тырра вырса пухрĕ. Çапла, М. Громов юлташ хăйĕн комбайнĕпе 1943 çулта тыра вырмалли плана иртерсе тултарчĕ, 45 килограмм краççин перекетлесе хăварчĕ. М. Громов юлташ плана пурнăçланипе лăпланса лармасть, вăл халĕ те тимлĕн ĕçлет. Кулленех 18—20-шер гектар тыра вырать.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

Комбайнпа тыра вырмалли çулталăкри плана срокчен тата иртерсе тултарнă ятпа ЧАССР Наркомземĕ Малов юлташ М. Громов комбайнер патне çакăн пек телеграмма янă:

«Панă задание ăнăçлăн тултарнă ятпа Сире тав тăватăп. Хăвăрăн комбайнпа эсир малашне те ăнăçлăн ĕçлессе тата ытти комбайнерсене пулăшу парасса шанса тăратăп.

Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ
Н. МАЛОВ».

Кĕреплеллĕ çавасемпе талăкра 0,60 гектар çулаççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, августăн 17-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Юлашки вăхăтра тырпулсене пухса кĕртес ĕç районри колхозсенче татах та вăйланчĕ. Вăрнар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвне кашни колхозрах сўтсе-явнă. Колхозниксемпе колхозницăсем çав чĕнў çине ĕçпе ответлеме тăрăшаççĕ.

Августăн 15-мĕшĕ тĕлне районĕпе 10845 гектар тыра вырса пухнă. Ку вăл пĕтĕм тырпулăн 68 процентчĕ пулать. Çак вăхăтрах 3041 гектар çинчен кĕлте турттарса капана хывнă, 1885 гектар тыррине çапнă.

«Труженик», «Самолет», «Коминтерн», «Великан», «Трактор» колхозсем пур йышши тырăсене те ыран-паянах вырса пĕтереççĕ. «Трактор» колхозра тырра кĕреплеллĕ çавасемпе тухăçлăн çулаççĕ. 3-мĕш бригадăра кĕреплеллĕ çавасемпе тăххăрăн тыра çулаççĕ, пурте нормăна иртерсе тултараççĕ. В. Яхтанская, Е. Чамашева, Е. Белова, Х. Яшина колхозницăсем кĕреплеллĕ çавасемпе 0,25 гектар вырăнне кулленех 0,60-шар гектара çити тыра çулаççĕ.

Районри чылай колхозсем йĕтĕн татма пуçларĕç. «Красное Сормово», «Новый путь» колхозсем 6-шар гектар йĕтĕн татнă. Сталин ячĕпе тăракан колхоз 6 гектар йĕтĕн татрĕ, татнă хыççăнах çапрĕ те шыва хутрĕ.

Х. ЛИСИН.

Çуртырисен 75 процентне вырса пуçтарнă

ЭЛĔК. (**Хамăр корр., телефонпа**). Сталин юлташăн Орелпа Белгород хулисене ирĕке кăларнă ятпа панă приказне районри пур колхозсенче те активлăн сўтсе-яврĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем татах тухăçлăрах ĕçлеме пулчĕç.

«Самолет» колхоз кĕрхи тырăсене 7 кун хушшинче вырса пĕтерсе, кĕлтесене капана хывса лартнă. Кĕлтесене капана хывас ĕçре Иванов, Фомин юлташсем ĕç нормине кашни кунах 150-шар процент тултарса пычĕç.

Колхоз августăн 14-мĕшĕ тĕлне çуртырисен 75 процентне вырса пуçтарчĕ. Тыра вырнă вăхăтрах авăн çапаççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра та ыраш вырса пĕтерсе, çуртырисене çурри ытла вырнă. Колхоз государствăна тыра парас ĕçе çак кунсенчех пурнăçлать.

Кăтартуллăн ĕçлеççĕ

ИШЛЕЙ. Тăрăн ялсоветĕнчи «Çĕнĕ пурнăç» колхозри çамрăксем уборкăра кăтартуллăн ĕçлеççĕ. 15 çулхи В. Анисимова, В. Дмитриева, И. Осипова хĕрачасем кунне 200 кĕлте вырас вырăнне 250—300-шер кĕлте выраççĕ. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче колхозницăсене вĕсем хаçат-журналсем вуласа параççĕ.

Укерчĕк çинче: Ишлей районĕнчи Водопьянов ячĕпе тăракан колхозри агитколлектив членĕ—отечественнăй вăрçă инвалидĕ Николаев юлташ хирте колхозниксене хаçат вуласа парать.

Н. ДАНИЛОВ фотоўкерчĕкĕ

Тырпула питĕ тăккалаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 17-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Эпир Янкасри «Волга» колхозăн уйхирĕсенче пултăмăр. Вăрманхĕрринчи пусăра колхозницăсем ыраш выраççĕ. Кашни тăваткăл метртах 70—80 пучах тăккаланса юлнă. Колхоз председателĕ П. Тихонов юлташ бригадăсенче час-часах пулать, тăкăнса юлнă пучахсем çурлă кăçса çўрет, анчах ăна пухас тесе çăмах та хушмасть. Ялта туллимар вăтам шкул пур. Вĕренекен ачасем темĕн чухлех. Шкул директорĕ Егорова юлташ та вырăнтах. Анчах ачасене пучах пухма организацилемен.

Тыра авăн çапнă çĕрте те нумай тăккаланать. Красноармейскинчи «Победа» колхозах илер. Кунта халĕ МТС бригади «МК—1100» маркăллă молотилкăпа авăн çапать. Çапнă тырра виçĕ лавпа амбара турттарса тăраççĕ.

Августăн 14-мĕшĕнче Е. Иванова колхозница итем çинчен амбарсем патне тыра турттарнă. Урапи шăтăк пулнине курнă пулсан та, вăл тыра тăккаланассинчен сыхланман. Çавна пула çул çинче, итемрен пуçласа кĕлетсем патне çитиччченех тыра тăкăнса пынă. Мĕн чухлĕ тыра тăкăннине шутласа илме те хĕн. Анчах çакăн пек ĕçлекенсене кунта айăплама мар, асăрхаттармаççĕ те.

Тăккаланчăксене «Свобода» колхозра та пуçтармаççĕ. Кунта та уйра пучах нумай юлнă. Ăна пухса илес вырăнне кĕтў кĕртсе яраççĕ. Ыраш пуссине çапла кĕтў кĕртсе ярса, темиçе сурăх тырăпа кўпĕнсе кайса вилнĕ.

Рязань облаçĕнчи пионерсем пек ĕçлеççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Çак çулхи май уйăхĕнче Рязань облаçĕнчи Спасск районĕнчи пионерсемпе шкул ачисем ялхуçалăх ĕçĕсене активлăн хутшăнассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарса яма Совет Союзĕнчи мĕнпур шкул ачисемпе пионерсене чĕнсе каларĕç.

Çав чĕнўре вĕсем колхозра ырми-канми ĕçлеме, колхозниксем хушшинче ăнлантарулла ĕçе туса пыма, ача яслисемпе площадкисене шефа илме, шкул участокĕнче лайăх ĕçлеме обязательствăсем илнĕччĕ.

Рязань облаçĕнчи пионерсемпе шкул ачисен пуçарăвне ырласа, Пашьелри пуçламĕш шкул çуллахи каникул вăхăтĕнче колхозра ĕçлеме шкул ачисен отрядне турĕ.

Пионерсемпе шкул ачисен отрячĕ каникул пуçланнăранпах «Большевик» колхозра ĕçлет. Отряд членĕсем халĕ уйхирти тырпула пуçтарса кĕртнĕ çĕрте хĕрсех ĕçлеççĕ. Е. Ильина, П. Ильина, Кудряшова, О. Васильева, Ф. Павлова тата ытти пионерсем те кунсерен 0,12—0,15-шер гектар таран выраççĕ.

Отряд колхозниксем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Каннă вăхăтра çамрăк ачасем колхозниксене çĕнĕ хаçатсемпе фронтовиксен çырăвĕсене вуласа панисĕр пуçне, таша-вăйăсем туса иртереççĕ, юрăсем юрласа параççĕ. Çавăн пекех тыра вырма тухнăранпа 6 номер стена хаçачĕ кăларнă.

Колхоза пулăшнипе пĕрлех шкул ачисем шкул участокĕ çинче те лайăх ĕçлерĕç.

В. Д.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇСЕМ АВГУСТĂН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Кĕрхи тата çурхи тырăсене вырнă	Капана хывнă	Авăн çапнă
Шупашкар	78,8	24,7	15,0
Вăрмар	78,6	12,6	9,1
Куславкка	76,2	22,5	12,6
Советски	73,8	16,5	6,0
Сĕнтĕрвăрри	71,8	22,0	18,1
Элĕк	71,1	17,3	6,7
Çĕрпў	70,2	40,3	17,7
Ишлей	69,8	16,4	9,1
Сĕнтĕр	69,8	10,6	8,2
Хĕрлĕ Чутай	69,2	27,9	17,3
Вăрнар	68,9	31,5	16,6
Калинино	68,2	15,6	5,8
Етĕрне	68,1	24,9	12,9
Октябрьски	66,2	16,3	11,3
Тăвай	65,8	12,9	8,8
Елчĕк	65,1	11,0	9,6
Йĕпреç	64,4	25,2	19,1
Шăхасан	62,9	20,4	9,0
Çĕмĕрле	62,3	34,1	11,2
Красноармейски	62,2	28,1	11,4
Шăмăршă	60,4	29,4	16,9
Комсомольски	57,3	13,5	7,5
Канаш	56,8	17,6	4,9
Первомайски	56,5	11,9	9,6
Улатăр	52,8	61,8	22,3
Чкаловски	50,5	11,2	7,5
Пăрачкав	46,3	27,3	9,2
Кувакино	35,6	31,9	16,6
Шупашкар хули	81,7	21,0	5,9
ЧАССР тăрăх	64,6	21,2	11,1
1943 çулхи августăн 10-мĕшĕ тĕлне пулнă	51,2	15,6	7,9

Тырпул хатĕрлемелли плана срокчен пурнăçа кĕртессишĕн тата Сталин юлташ патне пуринчен малтан рапорт яма право илессишĕн районсем хушшинче пуçланнă социализмлă ăмăрту августăн 15-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан СВОДКА

Районсем	Ăмăртура миçемĕш вырăн йышăннă
Сĕнтĕрвăрри	1
Етĕрне	2
Октябрьски	3
Куславкка	4
Советски	5
Шупашкар	6
Вăрмар	7
Çĕрпў	8
Элĕк	9
Сĕнтĕр	10
Калинино	11
Красноармейски	12
Вăрнар	13
Çĕмĕрле	14
Ишлей	15
Тăвай	16
Комсомольски	17
Хĕрлĕ Чутай	18
Йĕпреç	19
Первомайски	20
Шăхасан	21
Канаш	22
Улатăр	23
Елчĕк	24
Чкаловски	25
Кувакино	26
Шăмăршă	27
Пăрачкав	28

Районсен социализмла ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă Сĕнтĕрвăрри районĕ тыра памалли çулталăкри плана 19,3 процент тултарнă.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Пирĕн çарсем Жиздра хулине йышăнса илчĕç

БРЯНСК ЕНЕ, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Совет çарĕсем гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан вăрçăра тата тепĕр çĕнтерӳ турĕç. Пĕр чаçăн соединенийĕсем Жиздра хулине тата халăх пурăнакан темиçе пысăк пункта йышăнса илчĕç. Нимĕçсен пусмăрĕ айĕнчен вырăссен тата тепĕр хули ирĕке тухрĕ.

Жиздра хули фашистсен тылĕпе фронтне тӳгун çулпа çыхăнтарса тăракан, тăшман çарĕсем валли хĕçпăшал, апат-çимĕç кӳрсе тăмалли чи лайăх пункт пулнă.

Гитлеровецсем оборонăн çак узелĕ çине таянса Ржев, Сычевка, Гжатск, Вязьма районĕсенче тапăнса пыракан совет çарĕсене унтан куçарттарас тесе, темиçе уйăх каярах вăйлă атакăсем пуçласа янă. Пирĕн боецсем, тăшман хĕснине сирсе пăрахса, ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ. Нимĕçсен халсăрланнă чаçĕсен ирĕксĕрех оборонăна куçма лекнĕ. Фашистсем çав вырăна танксемпе кĕрешмелли сооруженисем туса тултарнă пулнă. Жиздра хулине вĕсем оборонăра тăрса çапăçма хатĕрленĕ пулнă, кунта питĕ пысăк вăйсем илсе пынă.

Икĕ кун каярах пирĕн чаçсем тăшманăн хирĕç тăмалли узелĕ çине наступлени пуçласа янă. Артиллери тата пехота çул уçнă хыççăн совет боецĕсем тăшманăн позицийĕсене атакăланă.

Тăшмана малтанхи кунах пысăк поражени тӳстернĕ. Жиздрăн çурçĕр енчи чи лайăх позицисене çухатнă хыççăн нимĕçсем совет çарĕсем хĕссе пынине кирек мĕн пулсан та чарса лартма тăрăшнă, вĕсем çапăçăва пехотăн тата танксен çĕнĕ резервĕсене кĕрте-кĕрте янă, флангсенчен темиçе контратака туса пăхнă, анчах вĕсен ĕçĕсем ăнман. Хаяр тытăçусем кунĕпех пынă. Тăшман кунта салтаксемпе офицерсем тата хĕçпăшалсем питĕ нумай çухатнă. Юлашкинчен нимĕçсем каялла чакнă. Халсăрланнă аскерсем, çиллине шăнарайма сăр, вĕсем ялсене çунтарнă, кĕперсене сирпĕнтернĕ, çулсене ватнă.

Жиздрăн хĕвелтухăç енче те хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Темле пысăк çухатусем тӳнине пăхмасăрах, Зикеево районĕнчи çулсен узелне тăшман хăй аллинчех тытса тăма тăрăшнă. Темиçе сехет хушши çапăçнă хыççăн тăшмана кунта та çапса аркатнă.

Тăшман хула çывăхĕнче хирĕç тăнине аркатса тăкнă хыççăн совет чаçĕсем Жиздра хулине çурçĕрпе кăнтăр енĕсенчен çĕмĕрсе кĕнĕ. Урамсенче çĕрĕпех çапăçусем пынă. Пирĕн чаçсем урамра та паттăррăн çапăçнă. Жиздра хули çинче паян хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет.

Хула урамĕсенче тата хула тулашĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе пин виллли выртса юлнă. Тăшман çынсем енĕпе те, техника енĕпе те пысăк çухату тӳсрĕ.

Совет чаçĕсем малалла наступлени туса пыраççĕ.

Майор М. БУЛКИН.

ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕсенче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе пĕр Халăх Комиссариачĕ социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Якунин юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводрах хăварма йышăннă тата çав завода пĕрремĕш преми памалла тунă.

* * *

ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ВЦСПС-па ССР Союзĕн Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Çĕмĕрлери экстракт заводĕнчех (директорĕ Шустин юлташ, парторганизаци секретарĕ Розенберг юлташ, завком председателĕ Павлова юлташ) хăварма тата ăна пĕрремĕш преми пама йышăннă.

* * *

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе ССР Союзĕн Аш-какайпа Сĕт-Çу Халăх Комиссариачĕ хатĕрлев организацийĕсемпе предприятисенче ĕçлекенсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Çĕрпӳ районĕнчи хатĕрлев конторине виççĕмĕш преми памалла тунă.

Ăмăрту вăй-хăвачĕ

Юнга ялсоветĕнчи 1905 çулти революци ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем Настя Быстрова, Настя Балуева, Мария Гусева тата Зоя Кашина пĕр кун хушшинче çурлапа 0,10 гектар вырас вырăнне 0,40-шер гектар тырă вырса пуçтарнă. Çапла вара нормăна 4 хут иртерсе тултарса, вĕсем кашни талăкра 7,5 ĕç кунĕ ĕçлесе тунă. Çакăн пек тухăçлăхпа вĕсем 5—6 кун ĕçленĕ.

Елкино салинчи вырăс хĕрарăмĕсем Настя Быстрова, Настя Балуева, Мария Гусева тата Зоя Кашина ыраша алăпа çур гектара яхăн вырни çинчен çывăхри çынсем кăна мар, пĕтĕм республикăри колхозниксем те пĕлчĕç.

* * *

1905-мĕш çулхи революци ячĕпе тăракан колхозăн кăçал ыраш ăнса пулнă. Колхозниксем ăна вырас вăхăта хытă кĕтнĕ.

Кĕтнĕ вăхăт çитнĕ. Июлĕн 24-мĕшĕнче колхоз ыраша суйласа вырма тухнă. Малтанхи кунсенче колхозниксем пурте пĕрле ретĕн тăрса вырнă. Колхоз председателĕ çамрăк коммунист Елагин çакна асăрхать.

— Ыраш талккишĕпех пулса çитсен кун пек вырма пăрахатпăр, кашни колхозникĕ уйрăм участок уйăрса парас пулать, колхозра фронтри боецсем пек кĕрешме социализмлă ăмăртăва анлăн саратпăр,— тет Елагин юлташ уйхир ĕçĕнчи бригадăсен бригадирĕсене хăй патне чĕнсе.

Колхозри чи ĕçчен хĕрарăмсен Н. Быстрова, Н. Балуева тата М. Гусева юлташсен ĕç участокĕ юнашар майлах. «Курăпăр-ха, кам мĕнле вырĕ», тенĕ вĕсенчен кашни ĕçе тытăнса.

Августăн малтанхи числисем, ир пуçласа каçченех ĕçлеме юрăхлă кунсем çитнĕ. Н. Быстрова хĕрĕх çулта, çапах та вăйпитти хĕрарăм, кунне 0,40 гектар вырать. М. Гусева, Н. Балуева тата З. Кашина юлташсем те унтан юлмаççĕ.

Юлашки кун сайрарах ыраша вырнă. Кунта норма та пысăкрах, талăкра 0,15 гектар вырмалла. Çапах та Н. Быстрова тата унăн юлташĕсем кунне 0,42-шер гектар выраççĕ. Августăн 6-мĕшĕнче вара Н. Быстрова юлташ 0,43 гектара çити тырă вырать.

— Тӳррипе каласан,—тет Быстрова юлташ,—çавăн чухлĕ ĕçленĕ хыççăн ывăнатăн ĕнтĕ. Анчах фронтра упăшка, ывăлсем юн тăкнине аса илетĕп те, пĕтĕм ывăнни иртсе каять, татах ĕçлес килет.

Ун шухăшне малалла тăсса Гусева юлташ çапла калать:

— Пирĕн войскăсем Орелпа Белгород патĕнче пысăк çĕнтерӳ тунипе, вĕсен ячĕпе Сталин юлташ приказ пани, вĕсене Мускав саламлани мана çĕнĕ вăй-хăват кĕртрĕ. Эпĕ виçĕ çын чухлĕ ĕçлеме пултартăм.

Настя Балуева халиччен тырă вырса курман. Вăл колхоза эвакуаци йĕркипе килнĕ. Пĕлтĕрпе кăçал вăл —хресчен. Тырă вырать, авăн çапать.

Балуева юлташăн икĕ ача, упăшки фронтра. Вĕсем пĕр-пĕрин патне çырсах тăраççĕ. Настя ĕçри çитĕнӳсем çинчен, упăшки—фронтри ултăнусем çинчен çыраççĕ.

Стахановкăсем халĕ кашни тĕрлĕрен ĕçре. Гусева юлташ—молотилкăна кĕлте ярать, Быстровăпа Балуева юлташсем улăм йăтаççĕ. Кунта та вĕсем кашниех 2—3 çыншăн ĕçлеççĕ.

Ĕçĕн пысăк тухăçлăхĕ пултарулăхра çеç мар, вăхăтпа туллин усă курнинче те. Вăхăт вĕсемшĕн темрен те хаклă. Эпир пынă чухне 19 çулхи хĕр Зоя Кашина тулă выратчĕ. Эпир унтан вăл мĕнле ĕçлени çинчен каласа пама ыйтрăмăр.

— Куратăр пулĕ, выратăп. Сирĕнпе калаçма та ерçместĕп,—терĕ вăл.

Каç—11 сехет. Вăл çаплах вырать. Калаççĕ: çав ĕçчен хĕр çывăрма пĕлмест, еплĕ чăтать, теççĕ.

Çапла ĕнтĕ, вĕсен ĕçтухăçлăхĕ—вĕсем тимлĕн ĕçленинче.

* * *

Республикăри колхозсенче халь Вăрнар районĕнчи колхозниксен чĕнĕвĕ тăрăх социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртессишĕн тата государствăна тырă памалли обязательствăсене срокчен пурнăçлассишĕн, çакăн пирки Сталин юлташа чи малтан рапорт пама тивĕçлĕ пулассишĕн чылай колхозниксем ăмăртăва тухрĕç. Пирĕн колхозсенче Елкинăри стахановкăсем пек ĕçлекенсем мĕн чухлĕ нумайрах пулĕç, пирĕн Ленин орденлĕ республика уборка ĕçĕсене вĕçлени çинчен Сталин юлташ патне çавăн чухлĕ хăвăртрах рапорт яма пултарĕ.

Т. ИВАНОВ.

СĔНТĔР. (Хамăр корр.).



ХУРА ТИНĔС ФЛОЧĔ. Совет Союзĕн Геройĕ гварди полковникĕ Токарев юлташăн чаçĕнчи гвардеец-летчиксем хăв хăйсен çурăмĕсем çинче тӳссе кураççĕ. Эпир утлăн пыра-пыра çапнине нимĕçсем... Гвардеец-летчиксем тăшманăн транспорчĕсемпе карапĕсене, торпедăй катерсемпе çар эшелонĕсене, склачĕсене, аэродромĕсене пайтах çĕмĕрнĕ. Укерчĕк çинче: боевой задание пурнăçлама вĕçсе кайма хатĕрленекен самолет çумне вăйлă торпеда çакаççĕ.

Е. ХАЛДЕЙ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Районри хаçатсене пăхса тухни

Пысăк ыйтăва манса хăварнă

«Вăрçăн йывăр условийĕсенче иртнĕ икĕ вĕренӳ çулне шкулсен мирлĕ вăхăтри вунă çулхи ĕçĕпе танлаштарма пулать»,—тесе çырчĕ «Учительская газета».

Йывăрлăхсене хăюллăн сирсе, Чăваш республикинчи шкулсем, тăван çĕршыври мĕнпур шкулсем пекех, вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç.

Умра вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренӳ çулĕ. Республикăри шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне кăтартуллăн хатĕрлесе çитересси—çутĕç органĕсен хисеплĕ ĕçĕ пулса тăрать. Ку ĕçре большевикла пичет работникĕсен ответлăхĕ те пысăк. Вĕсен шкулсен пурнăçне хаçатра йĕркеллĕн çутатса тăмалла, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, пĕр-пĕрин опытне сарма тата шкулсенчи вĕренĕве лайăх йĕркелеме çутĕç работникĕсене пулăшмалла. Анчах Йĕпреç районĕнчи «Колхоз пурнăçĕ» хаçатпа Ишлей районĕнчи «Колхозник хаçачĕ» çак пысăк ыйтăва манса хăварнă.

Эпир «Колхозник пурнăçĕ» хаçатăн (редакторĕ М. Марков юлташ) кăçалхи виçĕ уйăх хушшинчи, май—июль уйăхĕсенчи номерĕсене пăхса тухрăмăр. Вĕсенче районри шкулсем мĕнле ĕçлени çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă статьясем вуçех те çук. Хаçат хăйĕн июлĕн 5-мĕшĕнчи номерĕнче лайăх ĕç пуçарнăччĕ. Унта Пысăк Упакассинчи туллимар вăтам шкулти учительсемпе вĕренекенсем вутă хатĕрлеме тытăнни, кашни вĕренекен шкул валли икĕ кубометртан кая мар вутă хатĕрлеме обязательство илни çинчен сасă панăччĕ. Анчах çак пуçарăва районри ытти шкулсем мĕнле йышăнса илнине хаçат хăйĕн страницисем çинче пачах çутатмарĕ, манса хăварчĕ.

Тĕп чăрмав—çырса тăракансем сахаллинче. Июньпе июль уйăхĕсенче шкул ыйтăвĕпе хаçатра икĕ статья çеç пичетленнĕ. Вырăнсенчен çырманран пулас, хаçат редакторĕ Марков юлташ хăй июнĕн 22-мĕшĕнчи номерте «Шкул ачисене ялхуçалăх ĕçĕсене анлăн явăçтарар» ятлă статья çырчĕ. Ку статьяна çутĕç работникĕ çырнă пулсан, паллах, усă ытларах пулатчĕ. Вăл çак ĕçе кăçал мĕнле организацилемеллине тĕплĕнрех кăтартса панă пулĕччĕ.

Хаçата пăхса тухсан, пуçра çакăн пек шухăш çуралать: çутĕç работникĕсем — хаçатран, редакцинче ĕçлекенсем—çутĕç работникĕсенчен инçе тăраççĕ.

«Колхозник хаçачĕн» те (редакторĕ В. Гуськов юлташ) çакнашкал çитменлĕхсемех. Вăл та шкул пурнăçне хутран-ситрен çеç çутатса тăрать. Май тата июнь уйăхĕсенче хаçат пĕлӳ тĕрĕслевĕсене хатĕрленни, пĕлӳ тĕрĕслевĕсем мĕнле иртсе пыни, шкул ачисем колхозра ĕçлени çинчен самаях çырса тăчĕ. Анчах июль уйăхĕнче—шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлемелли хĕрӳ тапхăр пуçлансан—редакцинче ĕçлекенсем çак ыйтупа çырма пăрахрĕç. Уйăх вĕçленеспе—июлĕн 22-мĕшĕнче кăна вĕсем Мăнал шкулĕ вĕренӳ çулне хатĕрленсе çитни çинчен В. Томасова юлташ çырнă статьяна пичетлесе кăларчĕç. Анчах ăна та пăтраштарса çырнă.

Шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес ыйту—пысăк ыйту. Ку ĕç республикăра тивĕçлипе пулса пымасть-ха. ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ шкулсем, çутĕç, ача-пăча учрежденийĕсем тата больницăсем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе июль уйăхĕнче çирĕмкунлăх ирттерчĕç. Асăннă районсенчи хаçатсен редакторĕсем çирĕмкунлăх çинчен аса та илмерĕç.

«Колхоз пурнăçĕпе» «Колхозник хаçачĕн» хăйсен ĕçĕнчи çак пысăк çитменлĕхе пĕтермелле.

Ют çĕршывсенче

ШУРĂ ÇУРТ РУЗВЕЛЬТПА ЧЕРЧИЛЛЬ КАНАШЛАВĔ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ВАШИНГТОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт çапла пĕлтернĕ: Рузвельтпа Черчилль 3 кун хушши Рузвельтăн Гайд-паркри (Нью-Йорк штачĕ) çуллахи резиденцийĕнче канашлу туса ирттернĕ. Черчилль Квебек хулине таврăннă. Рузвельт Вашингтона кайнă. Çак эрнере вăл Квебека тухса каять.

ПОДВОДНĂЙ ЛОДКĂСЕМПЕ КĔРЕШНИ ÇИНЧЕН РУЗВЕЛЬТПА ЧЕРЧИЛЛЬ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕпе Рузвельтпа Великобританин премьер-министрĕ Черчилль тăшманăн подводнăй лодкисемпе кĕрешес ĕç мĕнле пыни çинчен иккĕшĕ пĕрле каласа панине пичетлесе кăларнă. Май, июнь тата июль уйăхĕсенче союзниксем тăшманăн 90 подводнăй лодкине путарнă. Çав вăхăтрах пĕрлешӳллĕ нацисен суту-илӳ флочĕ 1943 çулта 3 миллион тоннăлăх ытла ӳснĕ.

ВЕНГРИРИ ВĂРÇĂ ХИРĔÇЛĔ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви хăйĕн Стамбулри корреспондентĕнчен илнĕ хыпара пĕлтерет. Унта çапла каланă: Венгрире мир тăвăр тесе пысăк демонстрацисем пулса иртеççĕ. Венгрин нефть тасатакан промышленность центрĕнче—Мезекевешд хулинче—пысăк демонстраци пулса иртнĕ. Ку демонстрацире 2.000 çын ытла пулнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: иртнĕ каç акăлчансен бомбардировщикĕсем Милан хулинчи промышленность объекчĕсене тапăннă.

Англи авиацийĕ Берлинри объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: «Вĕçекен крепость» йышши самолетсен пысăк соединенийĕсем августăн 15-мĕшĕнче каçхине тăшманăн Францири Голландири аэродромĕсене атакăланă.

Сицилири вăрçă ĕçĕсем

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ МЕССИНА ХУЛИНЕ КĔНĔ

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен вăйĕсен Çурçĕр Африкăри штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Сицили утравĕн хĕвелтухăç çыранĕнче Таормина хулине тытса илнĕ, тенĕ.

ЛОНДОН, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: паян ирхине Америка çарĕсем Мессина хулине кĕчĕç, тет.

Тăван герой чапне çĕклекен поэма

Вăрçă геройсем çуратать. Çак сăмахсем тĕрĕссине отечественнăй аслă вăрçă кунран-кун çирĕплетсе парать. Тăван çĕршыв ирĕкĕшĕн, халăхсен кунçулĕшĕн кĕрешекен Хĕрлĕ Çар хăй ретĕсенчен нумай геройсем ӳстерсе кăларать. Çав геройсем — тĕрĕс ĕçшĕн [illegible]акан вăрçăра тискер тăшмана хирĕç хăйсене шеллемесĕр çапăçса чапа тухнă çынсем. Çавăнпа та совет халăхĕ хăйĕн геройĕсене нихăçан та манас çук. Çак геройсен çĕнтерӳллĕ ĕçĕсем яланах халăх асĕнче юлмалла, вĕсен ячĕсем ĕмĕртен-ĕмĕре чыслăхра тăрса, вилĕмсĕр пулмалла. Поэтсемпе писательсем вĕсене мухтаса аслăлакан паха произведенисем çырĕç, композиторсем илемлĕ юрăсем хывĕç, художниксем вĕсен сăнĕсемпе çĕнтерĕвĕсене кăтартакан картинăсем ӳкерĕç, артистсем çав геройсен ролĕсене сценăсем çинче пултаруллăн выляса кăтартĕç.

Совет литературипе искусстви ун пек геройкăллă произведенисемпе ӳссе пуянланса пынине эпир паянхи кунрах куратпăр ĕнтĕ. Фронтра хаяр çапăçу кĕрлет. Çак вăхăтрах унта çуралакан геройсем çинчен пирĕн литературăпа искусство çыннисем паха произведенисем çыраççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçăра чăваш халăхĕн маттур ывăлĕсем те хăйсене хĕрхенмесĕр арăслансем пекех çапăçаççĕ. Вĕсенчен чи паллисем — Совет Союзĕн Геройĕсем Федот Орлов, Мирон Ефимов, Борис Васильев, П. Лаптев, Геннадий Габайдуллин, В. Винокуров, паттăр пулеметчик Иван Смирнов тата ыттисем те — яланах совет халăхĕн асĕнче тăрса, ĕмĕртен ĕмĕре хисепленсе аслăланма тивĕçлĕ. Вĕсен ячĕсем Чăваш республики пурнăçĕнче кăна мар, пĕтĕм Совет çĕршывĕн историйĕнче те сӳнми çутă çăлтăрсем пек çиçсе тăрĕç.

Хальхи вăхăтра пирĕн писательсемпе искусство çыннисем умĕнче хăйсен кашни геройĕ ятнех вилĕмсĕр произведени çырса, вĕсен мухтавлă ячĕсемпе ĕçĕсене çитес ăрусем асăнмалла тăвас парăм тăрать. Ку парăм —пысăк парăм. Ăна татас тĕлĕшпе пирĕн литераторсемпе искусство çыннисен пурин те халех пĕтĕм пултарулăха хурса ĕçлеме тытăнмалла.

Кăçал «Чăваш Коммуни» хаçатра А. Эсхелĕн «Ăмăрткайăк» ятлă поэми пичетленсе тухрĕ. Ку поэма тăван геройсенчен пĕрин—Федот Никитич Орлов капитанăн пурнăçĕпе, унăн çапăçури ĕçĕсемпе паллаштарать.

«Ăмăрткайăк»—чăваш совет литератури хăйĕн геройĕсемшĕн кӳнĕ чи малтанхи пысăк парне, геройсемшĕн тунă литература памятникĕ шутланать. Ун пек геройкăллă произведенисем пирĕн çултан çул нумайлансах пымалла.

«Ăмăрткайăк» поэма пахалăх тĕлĕшпе мĕнле вырăн йышăнассине пĕчĕк статьярах кăтартса пама çук. Унăн ăшчикĕпе тулашĕнчи (форминчи) тивлетлĕхĕсене кăтартса парас тесен, поэмăна тĕплĕн тишкĕрме пысăк статьясем çырас пулать. Çапах та кунта çакна каламалла: Эсхель хăйĕн поэмине, пĕтĕмĕшпе илсен, аван çырнă.

Кирек мĕнле ĕçе те, лайăх тăвас тесен, ăна чĕререн юратни, хавхаланни кирлĕ. Ĕçе юратса, чунран парăнса тата ĕçĕн мелне пĕлсе тусан çеç, вăл лайăх та илемлĕ пулать. Ку вăл литература творчествинче те çавах.

Произведени илемлĕ пултăр тесен, пуринчен малтан ху мĕн çинчен çырас тенине вĕçне çитиччен уçăмлăн пĕлсе тăмалла, пулас произведенийĕн геройне юратмалла тата, пуринчен те кирлĕреххи вăл, — çырас произведенин сюжетне чăн пурнăçпа çыхăнтарса, ăна тĕрĕс йĕрпе тытса пыма пĕлни кирлĕ. «Ăмăрткайăк» авторне кусем çинчен вĕрентме кирлĕ мар. Кăна эпир поэмăна вулакансене астутарма çеç каларăмăр. Эсхель хăйĕн геройне чĕререн хисепленĕ, ăна юратнă, çавăнпа вăл поэмине те çав тери юратса çырнă. Эпир унăн поэмине вуланă чух автор хăйĕн поэмине тăрăшса, пĕтĕм пултарулăхне хурса çырнине туятпăр.

Виçĕ пин строкаллă поэма вăл—пысăк япала. Ăна çырса пĕтерме нумай тимлĕх, тӳсĕмлĕх тата сахал мар вăхăт кирлĕ. Апла пулин те Эсхель — ку поэмăна вăраха ямасăр, вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа çырса пĕтерчĕ. Васкавлăн çырнă произведенире час-часах опытлă авторсен те шăйрăксем, кăлтăксем, çитменлĕхсем кайма пултараççĕ. Анчах та «Ăмăрткайăк» поэмăра эпир пысăк шăйрăксемех курмастпăр. Поэмăна хăвăрт çырнине шута илсен, çапла кăна каламалла: Эсхель «Ăмăрткайăка» литература творчествин мастерлăхĕпе тата поэт хĕрӳллĕхĕпе çырса кăларчĕ.

Улах кĕтесри лăпкă ялта ӳснĕ чăваш ачи, ачаран кĕтӳ кĕтсе, çурма тăлăх пурнăçпа пурăннăскер, халĕ ирĕклĕ Совет çĕрĕ çийĕн ăмăрткайăк пек мăнаçлăн вĕçсе çӳрекен летчик пулса тăнине поэма ĕнентерӳллĕн кăтартса парать. Ку летчик, Тăван çĕршывăн çулăмлă патриочĕ, пирĕн паттăр земляк — Ф. Н. Орлов, вилĕмсĕр Гастеллон тивлетлĕ вĕренекенĕ пулнăскер, отечественнăй вăрçăра хăйĕн вĕрентекенĕ Гастелло пиллесе панă хăватлă самолет çинчен аça-çиçĕмлĕн вут-хĕм тăкса, ирсĕр нимĕç фашисчĕсене вăйлăн çунтарчĕ. Орлов, хăйĕн маттурлăхĕпе хăюлăхне пула, Совет Союзĕн Геройĕ, чăваш халăхĕн пурте хисеплекен ывăлĕ, юмахри пек паттăрĕ пулса тăчĕ. Вырăс колхозникĕ Сарсков ăна хисеплесе, хăйĕн вăйĕпе самолет туянса пачĕ. Халĕ Орлов капитан чаплă вĕçевçĕ, ĕмĕртен-ĕмĕре мухтава тивĕçлĕ вилĕмсĕр герой, ирсĕр тăшмансене малалла та хаяррăн пĕтерсе пырать. Эсхель хăйĕн поэминче çаксене витĕмлĕн кăтартса пама пултарнă.

Поэма содержанийĕнчи тĕрлĕрен лару-тăру тапхăрĕсене тĕрлĕрен сăвă виçисемпе çыхăнтарса çырнă. Вĕсенче ритм тикĕслĕхĕ янса пырать, рифмăсене ăстайлăн çыпăçтарса пынине куранать.

Поэмăн çак лайăх енĕсене кăтартса пани вăл, çапах та, ăна çĕр процентпех çителĕклĕ çырнă, пĕр шăйрăксăр произведени тенине пĕлтермест-ха. «Ăмăрткайăк» поэмăн, ман шутпа, композиципе фабули тĕлĕшĕпе кирлĕ пек çыхăнтарайман вырăнсем пур. Çавăн пекех тата ритмикăпа рифмăсем енĕпе те тĕплĕн якатса çитереймен вырăнсем тĕл пулаççĕ.

Поэма 19 сыпăкран тăрать. Ку шутран малтанхи 6 сыпăкĕ Орловăн ача чухнехи ялти пурнăçне кăтартса параççĕ. Çиччĕмĕш сыпăкран пуçласа тин поэмăра паттăр вĕçевçĕн Хĕрлĕ Çарти боевой пурнăçĕпе ĕçĕсене сăнлама пуçланă. Вулакансене пуринчен ытла герой-вĕçевçĕн çитĕнсе çитнĕ хыççăнхи пурнăçĕпе ĕçĕсем интереслентереççĕ. Çавăнпа та геройăн ачалăхĕ çинчен ик-виçĕ сыпăкпа каласа пани те çителĕклĕ пулнă пулĕччĕ. Виççĕмĕш сыпăк — «Якур мучи юмахĕ»—поэмăра ытлашши пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ăна кĕскенреххĕн каласа пама та май пулнă.

Поэмăна вуласа тухсан, автор унăн пуçламăшĕ çинче (геройăн ялтан кайиччен хи пурнăçĕ çинче) тимлĕн ĕçлесе ларни сисĕнет, малалла, поэма вăрăма тăсăлнине кура, автор ăна васкараххăн çырни тата ывăнса çитни палăрать. Çакна пула геройăн чи чаплă тапхăрĕнчи пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен калакан сыпăксенче хăшпĕр тĕлсем поэзиллĕ сăнлăх тĕлĕшпе те, ритм енĕпе те имшер тухаççĕ.

Сăмахран:

Тăшман вилĕм курать.
Çавăнпа та урсах вăл
Аркатма талпăнать
Пирĕн аслă çара.
Пур çаратнă танкран (?)
Пуçтарса хурçă савăл
Тăшман пирĕн çине
Умлăн хыçлăн ярать.
(13-мĕш сыпăкран).

Е тата:

Анчах самолетсем —
Пурте çĕнĕ те лайăх.
Орлов ӳлтă йышши
Аппаратпа вĕçет..:
(19-мĕш сыпăкран).

Ку йĕркесенче поэзилĕх эрешĕ çухалать, ритмпа рифмăсем пăсăлаççĕ. Сăвă йĕркисем прозăланса, ахаль статья сăмахĕсем пек пулса тухаççĕ. Çак хушăрах ăнланма йывăр строкасем те тĕл пулкалаççĕ.

Сăмахран:

Халь кăначчĕ питĕ лăпкă каçчĕ,
Анчах ир арканчĕ ун чухне (?)
Капитан çав ир персе антарчĕ
Фашистсен пĕрремĕш çăханне..:
(10-мĕш сыпăкран).

Паллах, поэт кунта лăпкă каç хыççăн хаяр çапăçуллă ир пуçланса кайни çинчен каланă ĕнтĕ, анчах та вăл чăваш чĕлхин законне пăснă. Тухайман строкасем поэмăра татах та тĕлпулкалаççĕ. Анчах та виçĕ пин строкаллă поэмăра, пĕтĕмĕшпе илсен, ун пек шăйрăксем вĕсем курăнсах та каймаççĕ.

Эсхель—пултарулă поэт. Çавăнпа та хăвăрт çырнă пысăк поэмăри пĕчĕк çитменлĕхсемпе кăлтăксене вăл çăмăллăнах пĕтерессе пĕр иккеленмесĕр шанса тăма пулать.

Эсхель чăваш совет литературишĕн пысăк ĕç туса пачĕ. «Ăмăрткайăк» поэма пирĕн отечественнăй вăрçăра тухнă тăван геройсене мухтаса аслăлакан чи малтанхи паха произведени. Ку произведенишĕн пирĕн пурин те хавасланмалла, хĕпĕртемелле. Эсхелĕн çитĕнĕвĕ—пĕтĕм чăваш литературин çитĕнĕвĕ. Малашне кашни поэт, кашни писатель çакнашкал произведенисем парасса кĕтмелле.

С. ЭЛЬГЕР.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 216 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.